# Тĕнчери халăхсен тăван чĕлхе кунĕ

## *(Класс тулашĕнче irттермелли уяв каçĕн сценарийĕ)*

***Л.А. ЯРУХИНА**, Тутар Республикин Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Упири тĕп шкулта вĕрентекен*

**Пĕлÿ тĕллевĕ**: тĕнчери пĕтĕм халăхăн тăван чĕлхе кунĕн историйĕпе паллаштарасси; хальхи саманара чĕлхе проблемине пăхса тухасси.

**Сапăрлăх тĕллевĕ**: тăван чĕлхене хисеплеме, юратма, унăн илемлĕхне упрама хăнăхтарасси; тĕрлĕ халăх культурине, вĕсен чĕлхине хисеплеме хăнăхтарасси.

**Аталантару тĕллевĕ**: ачасен ăс-хакăлне, тимлĕхне, шухăшлав хăнăхăвне, сăмах пуххине ÿстересси; тавра курăмне аталантарасси.

**Актуаллăхĕ**. Чĕлхе культурăна тата халăх хăй евĕрлĕхне упраса пыракан тĕп инструмент шутланать. ЮНЕСКО шучĕпе, тĕнчери ултă пин чĕлхерен çурри çывăх вăхăтра çухалма пултарать. Вĕсене упраса хăварас тĕллевпе Тăван чĕлхе кунне йĕркеленĕ.

**Кирлĕ хатĕрсем**: компьютер, проектор, Power Point программăпа хатĕрленĕ слайдсем, карточкăсем, жетонсем, жюри членĕсен хаклав хучĕ, плакатсем. Тĕслĕхрен, «Чĕлхе хăйне пултарнă халăхпа кăна вилет, çавăнпа та халăх хăй чĕлхине мантăр тени çав халăха вилĕм суннипе пĕр танах». *(И.Я. Яковлев.)*

### Ĕ ç ю х ă м ĕ

1-м ĕ ш в у л а к а н. Паян Пĕтĕм тĕнчери тăван чĕлхе кунĕ. Чĕлхе культурăна тата халăх хăй евĕрлĕхне упраса пыракан тĕп инструмент шутланать. ЮНЕСКО шучĕпе, çĕр чăмăрĕ çинче пĕтĕмпе ултă пин тĕрлĕ чĕлхе. Çав чĕлхесенчен çурри çывăх вăхăтра çухалма пултарать. Çĕр чăмăрĕ çинчи чĕлхесене упраса хăварас тĕллевпе Тăван чĕлхе кунне йĕркеленĕ.

2-м ĕ ш в у л а к а н. Пĕтĕм тĕнчери чĕлхесен кунне паллă тума 1999 çулта чÿк уйăхĕнче ЮНЕСКО организацийĕн аслă конференцийĕнче каласа хăварнă. Пĕрремĕш хут ăна 2000 çулта нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнче паллă тунă. Çак куна ахальтен суйласа илмен иккен. Нарăсăн 21-мĕшĕнче 1952 çулта Бангладешăн тĕп хулинче хăйсен чĕлхине хÿтĕлеме тухнă студентсене полицейскийсем пеме пуçланă.

3-м ĕ ш в у л а к а н. Мĕн пур чĕлхене йышăнни тата хисеплени тăнăçлăха упрать. Кашни чĕлхе хăйне евĕр, унра халăх менталитечĕ тата йăли-йĕрки палăрать.

Кĕвĕ янăрать (голоса мира).

1-м ĕ ш в у л а к а н. Тĕнчере чи анлă сарăлнă чĕлхе вăл – Китай чĕлхи, унпа 650 миллион çын калаçать, акăлчанла – 295 миллион, вырăсла – 200 миллион, чăвашла – 2 миллион ытла. Халăх шучĕ миллионран иртсен çав халăха йышлă, аслă халăхсен картине кĕртеççĕ. Пирĕн чăваш чĕлхи çак пин-пин чĕлхе хушшинче сăваплă, ырă ятлă.

2-м ĕ ш в у л а к а н. Çĕр чăмăрĕ çинчи чĕлхесене ултă ушкăна пайланă: пĕтес хăрушлăх çук, çывăх вăхăтра çухалма пултарать, чĕлхе пĕтес хăрушлăх пур, чĕлхе пĕтес пысăк хăрушлăх пур, вилме патне çитнĕ, чĕлхе пĕтнĕ.

Раççей гимнĕ янăрать.

3-м ĕ ш в у л а к а н. ЮНЕСКО Раççейре вилсе пыракан чĕлхесене шутланă. Раççейри чĕлхесен карттине пăхсан 20 чĕлхе пачах пĕтнине курма пулать (айн, юг, убых...), 22-шĕ пĕтес патне çитнĕ (алеут, ительмен...), 29 чĕлхе пысăк хăрушлăхра (чукот, карели...), 49 чĕлхе пĕтес хăрушлăх пур (калмăк, удмурт...), тата 20 чĕлхе шиклентерет (белорус, чечен, якут...), юлашкисен шутне чăваш чĕлхи те кĕрет. Пурĕ 136 чĕлхе... Хăшпĕр чĕлхепе 10 е ытларах çын анчах калаçать, вĕсем те ватăсем кăна.

1-м ĕ ш в у л а к а н. Мĕне пула чĕлхесем пĕтеççĕха? Хыпарсем илмелли майсем ÿссе пыраççĕ, çавăнпа чĕлхесен вырăнĕ чакать.

2-м ĕ ш в у л а к а н. Кашни халăх чĕлхи – турă панă пуянлăх. Вĕсем пурте хăйне майлă çепĕç, ачаш... Чăваш чĕлхи пуян та илемлĕ, янăравлă та çепĕç, паха та асамлă. Вăл чăваш юрри пек янăравлă та кĕвĕллĕ, унпа чуна ачашлама е амантма, çĕклеме е ÿкерме, хавхалантарма пулать.

Чăваш кĕвви янăрать.

3-м ĕ ш в у л а к а н. «Чи кирлĕ, чи хисеплĕ япала вăл – тăван чĕлхе. Унта Тăван çĕр-шыв, пурнăç, тăван халăх, унăн ĕмĕчĕ, телейĕ. Ĕмĕр пурăн Тăван çĕр-шывра, ĕмĕр вĕрен тăрăшса тăван чĕлхене», – тенĕ чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ, паллă академик Г.Н. Волков.

1-м ĕ ш в у л а к а н. Пурнăçра – пĕр анне. Тăван чĕлхе те пĕрре. Ăна упрасси –пирĕн тивĕç. Иван Яковлевич Яковлев пуласлăх çыннисене тăван чĕлхене упрама пиллесе хăварнă. Çапла çеç чăваш чĕлхи ыттисенчен кая пулмĕ тенĕ вăл.

2-м ĕ ш в у л а к а н.

Чăваш юрри – чăваш чĕри.
Тăван атте вăйне пире кăтартрĕ:
Çич тинĕс урлă çук унтан чĕрри,
Аттила пек, пире вăл паттăрлатрĕ!

Чăваш юрри янăрать.

### Уяв каçĕн 2-мĕш пайĕ.
### «Выляр-ха тăван чĕлхене савса» конкурс

1-м ĕ ш е р т с е п ы р а к а н. Ачасем, халĕ эпир сирĕнпе «Выляр-ха тăван чĕлхене савса» конкурс

пуçлатпăр. Командăсем, жюри членĕсем хăйсен вырăнне йышăнма пултараççĕ. *(Кашни команда хăйĕнпе паллаштарать. Паллашу йĕрки ирĕклĕ, вăхăт – 2 минут.)*

2-мĕш ертсе пыракан. Пирĕн тăван чĕлхе ваттисен сăмахĕсемпе пуян. Пĕрремĕш номинаци «Ваттисен сăмахĕсене вĕçле» ятлă. (*Командăсем карточкăпа ĕçлеççĕ. – 3 минут.*)

Алăра ĕç пултăр, пуçра … (ăс пултăр).
Ырă çынна ырă ятпа асăнаççĕ, усал çынна … ( усалпа).
Ыр лашана пĕр пушă, ырă çынна … (пĕр сăмах).
Пуян вилет – мул юлать, ыр çын вилет … (ят юлать).
Васкакан вакка … (сикнĕ).
Ĕмĕр пурăн … (ĕмĕр вĕрен).
Пур – пĕрле, çук – … (çурмалла).
Вăйлинчен вăйли пур, ăслинчен … (ăсли).
Сивĕ апат сивĕтмест, … (сивĕ сăмах сивĕтет).
Таракана пĕр çул, шыракана ... (çĕр çул).
Çамрăкла вĕренни чул çинче, ватăлла вĕренни … (юр çинче).
Ырă сăмах ылтăнран … (хаклă).

1-мĕш ертсе пыракан. «Çамрăк чĕлхеçĕсем» ĕçленĕ самантра куракансен ăсталăхне тĕрĕслесе пăхар. Тĕрĕс хуравшăн жетон тивĕçет. Жетон нумай пуçтаракан «Куракансем хушшинчи çамрăк чĕлхеçĕ» ятне илме тивĕç пулать.

Лашан иккĕ, качакан виççĕ, сурăхăн пачах та çук. Мĕн вăл? (*А* сасă.)
Çĕр варринче мĕн тăрать? (Ĕ.)
Страус хăйне кайăк теме пултарать-и? (Çук, вăл калаçма пĕлмест.)
Ирхине чи малтан эпир мĕн тăватпăр? (Вăранатпăр.)
Нарăс уйăхĕн 31-мĕшĕнче мĕнле уяв палăртаççĕ? (Нимĕнле те.)
Пĕрремĕш хĕрарăм лётчик? (Баба Яга.)
Шлепки пур – пуçĕ çук, ури пур – атти çук. Мĕн вăл? (Кăмпа.)

2-мĕш ертсе пыракан. Иккĕмĕш номинаци «Алфавита пĕлетĕр-и?» ятлă. Алфавитпа усă курса панă вăрттăнлăхсене тупăр. (*Командăсем карточкăпа ĕçлеççĕ. – 5 минут.*)

9-16-9-20 19-24-20-2-17 23-2-4-1-17 22-9-20-30-33-4-20-1,
9-16-9-20 4-9-20-8-17 23-2-20-2-30-21-1 23-2-4-1-17
29-9-15-27-8-19-8

(Ĕмĕр пурăн тăван çĕр-шывра, ĕмĕр вĕрен тăрăшса тăван чĕлхене.)

1-мĕш ертсе пыракан. Эпир куракансен ăсталăхне малалла тĕрĕслер. Тĕрĕс хуравлакан жетон илет.

Миçе «ав» илсен суя пулса тухать? (Ултав.)
Чăх «ачисем» мĕн ятлă? (Чĕпĕ.)
Тўпе юрăçи мĕн ятлă? (Тăри.)
Çур апельсин мĕне асилтерет? (Çур апельсина.)
Çут тĕнчере мĕн çивĕч? (Чĕлхе.)
Çут тĕнчере мĕн мăнтăр? (Çĕр.)
Упăшки ятлаçать, арăмĕ уй шăварать. (Аслатиллĕ çумăр.)

2-мĕш ертсе пыракан. Виççĕмĕш номинаци – «Чăвашсен апат-çимĕçĕ». Ку конкурсра чăвашсен апат-çимĕçĕ çинчен тата ăна мĕнле хатĕрлемелли çинчен каласа памалла. – 3 минут хатĕрленме.

1-мĕш ертсе пыракан. Командăсем ĕçленĕ вăхăтра куракансемпе малалла жетон пухар. Тăвансем сирĕншĕн кам пулнине тĕрĕс каламалла.

1. Аннен аппăшĕ. (Мăнакка.)
2. Аннен аппĕ. (Кукаçей.)
3. Пиччен арăмĕ. (Инке.)
4. Аннен пиччĕшĕ. (Кукка.)
5. Аттен амăшĕ. (Асанне.)
6. Ывăлăн арăмĕ. (Кин.)
7. Тăван аппан упăшки. (Йысна.)
8. Хĕрĕн упăшки. (Кĕрў.)
9. Аннен амăшĕ. (Кукамай.)
10. Аннен упăшки. (Атте.)

2-мĕш ертсе пыракан. Командăсем чăнах та тавçăрулă пулнине тĕрĕслер-ха? Халĕ хăвăрт хуравламалли ыйтусем. Вĕсене черетпе хуравлатпăр.

1. Чăваш Республикин тĕп хули. (Шупашкар.)
2. Чăваш чĕлхинче миçе падеж? (8.)
3. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене мĕн теççĕ? (Антонимсем.)
4. Мăшăр сăмахсене менле çыраççĕ? (Дефиспа.)
5. Чăваш алфавитĕнче миçе сас палли? (37.)
6. Чăваш алфавитне кам йĕркеленĕ? (И.Я. Яковлев.)
7. К.В. Ивановăн вилĕмсĕр произведенийĕ. («Нарспи».)
8. Тĕнчипе паллă чăваш космонавчĕ. (А.Г. Николаев.)
9. Подлежащипе сказуемăй мĕнле членсем пулаççĕ? (Тĕп членсем.)
10. Яковлевăн ячĕ. (Иван.)

1-мĕш ертсе пыракан. Тепĕр номинаци – «Кам маларах?». Панă сыпăксенчен предложени тумалла. ÇЫН ЧУ НĔ ЧĔЛ ХИН ЧЕ ПА ЛĂ РАТЬ. – 1 минут.

2-мĕш ертсе пыракан. Командăсем шутланă самантра куракансемпе «Кайăксен ятне пĕлетĕр-и?» вăййă irттерер. Кайăк ячĕсене чăвашла каламалла. Тĕрĕс хуравшăн – жетон.

1. Сорока – чакак.
2. Воробей – çерçи.
3. Голубь – кăвакарчăн.
4. Журавль – тăрна.
5. Снегирь – уйăп.
6. Соловей – шăпчăк.
7. Жаворонок – тăри.
8. Стриж – вĕршĕн.
9. Скворец – шăнкăрч.
10. Галка – чана, чавка.
11. Ворон – çăхан.
12. Ястреб – хурчка.
13. Чайка – чарлан.

1-мĕш ертсе пыракан. Паян пирĕн сирĕнпе интереслĕ тĕл пулу иртрĕ. Тăван чĕлхе ĕмĕрех пурăнтăр, ан пĕттĕр. Хамăр чĕлхене юратса вĕренер, ăна упрар, унпа кăмăлтан калаçар!

2-мĕш ертсе пыракан. Халĕ жюри членĕсене пĕтĕмлетў тума вăхăт çитрĕ. Вĕсем канашланă вăхăтра жетонсем шутлар та куракансем хушшинчи çамрăк чĕлхеçе палăртар.

1-м ĕ ш  е р т с е  п ы р а к а н. Мана Раиса Сарпи сăмахĕсем  аса килчĕç:

Тăван чĕлхене суйламаççĕ.
Суйлас пулсан та ăна
Эпĕ илĕттĕм суйласа,
Чăваш чĕлхийĕ, сана.

Çак сăмахсем кашни чăваш ачишĕн гимн вырăнĕнчех пулмалла.

2-м ĕ ш  е р т с е  п ы р а к а н. «Чĕлхе» сăмахпа синквейн тăвар-ха!

Чĕлхе
илемлĕ çепĕç
янăрать вĕрентет ăнлантарать
Тăван чĕлхене пирĕн упрамалла.
Хутшăну хатĕрĕ

1-м ĕ ш  е р т с е  п ы р а к а н. Халĕ жюри членĕсене сăмах парар!

Х у ш с а  п а н и

**Жюри членĕсен хаклав хучĕ**

| **Номинацисем** | **1-мĕш команда** | **2-мĕш команда** |
|---|---|---|
| «Ваттисен сăмахĕсене вĕçле» Кашни ваттисен сăмахĕшĕн 1 балл. Пурĕ 12 балл пухма пулать. | | |
| **«Алфавита пĕлетĕр-и?»** Кашни тĕрĕс предложенишĕн – 3 балл. Пурĕ 6 балл пухма пулать. | | |
| **«Чăвашсен апат-çимĕçĕ»** Чи пысăк балл – 5 | | |
| **«Хăвăрт ыйтусем»** Кашни тĕрĕс хурав – 1 балл. Пурĕ 5 балл пухма пулать | | |
| **«Кам маларах?»** Чи пысăк балл – 3 | | |